25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АПРЕЛЬ 17 ЭРНЕКУН 90(6025) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Тасалăхшăн—кĕрешĕве!

Вăрçă вăхăтĕсенче халăх хушшине тĕрлĕрен чир-чĕр, уйрăмăнах сикекен чирсем сарăлма пултараççĕ. Чир тапрашĕ ан сарăлтăр тесен, пирĕн пур çĕрте те тасамарлăха пĕтермелле. Тасалăх—халăх сывлăхĕн никĕсĕ. Çакна астуса, хальхи ответлă вăхăтра кашни совет патриочĕн хамăр хушăри тасамарлăхпа тирпейсĕрлĕхе хирĕç хаяр кĕрешӳ пуçласа ямалла. Кашни совет гражданинĕн — арçынĕн те, хĕрарăмĕн те,—ваттисенчен пуçласа ачасене çитиччченех, санитари правилисене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн кĕрешме тăнмалла.

Тасалăхшăн кĕрешес ĕç çине уйрăм çынсен анчах мар, пĕтĕм предприятисен, учрежденисен, мĕнпур организацисен пурин те тĕплĕн çавăрăнса пăхмалла. Ку тĕлĕшрен Шупашкарти эрех заводĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем пуçарса янă ĕç примерлă пулса тăрать.

«Эпир Шупашкар хулинчи пур ĕççыннисене те хамăрăн фабрикăсенче, заводсенче, колхозсенче, учрежденисенче, шкулсенче, яслисенче, чугунçул станцинче, пристаньре, урамсемпе площадьсенче, пурăнмалли çуртсенче, больницăсенче, обществăллă пур вырăнсенче те тасалăх тата санитари енĕпе кăтартуллă йĕркелĕх тăвассишĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнма чĕнетпĕр»—теççĕ эрех заводĕнчи рабочисемпе служащисем. Ку чĕнӳ пĕр Шупашкар хулинчи ĕççыннисене çеç мар, пĕтĕм республикăри халăха та тивет.

Санитарипе тасалăхшăн кĕрешес ĕçе медицина работникĕсем: врачсем, фельдшерсем, медсестрасем, трахомăна хирĕç кĕрешекен сестрасем пуçарса пымалла. Анчах та вăл кĕрешĕве пĕтĕм халăх массине мобилизацилеме пĕр медицина работникĕсем кăна çителĕклĕ мар. Ку кĕрешĕве пуçарса пырас ĕçе республикăри пĕтĕм культурăллă вăйăн: учительсен, агрономсен тата партипе комсомол организацийĕсенчи, советсенчи, колхозсенчи мĕнпур активистсен пурин те хутшăнас пулать. Ун пирки районсенчи сывлăх отделĕсен тата санитари станцийĕсен заведующийĕсен çак кунсенче пулса иртнĕ пĕтĕм республикăри канашлăвĕ те çаплах каласа хăварчĕ. Антисанитарие хирĕç кĕрешме пĕтĕм халăх массине çĕклемелле, вăл ĕçе республикăри мĕнпур культурăллă вăйăн туса пымалла.

Культурăллă вăйăн ĕççыннисен массине урамсенчи, кил хушшисенчи тата пӳрт-çуртсенчи тасамарлăхран чирсем тухса сарăлма пултарни çинчен, вăл чирсем халăхшăн хăрушă инкек кӳме пултарни çинчен тата çав чирсенчен сыхланмалли санитари правилисем çинчен ăнлантарса памалла, çак ăнлантару урлă ăна санитарипе тасалăхшăн кĕрешме чĕнмелле. Медицина работникĕсен халăх хушшинче чир-чĕртен сыхланма вĕрентекен профилактикăллă калаçусемпе лекцисем туса ирттерессине татах та вăйлатас пулать.

Халăха санитарипе тасалăхшăн кĕрешме чĕннĕ чухне ăна пирĕн хамăрăн предприятисемпе учрежденисенчи тата обществăннăй вырăнсенчи примерлă тасалăха кăтартмалла. Ку тĕлĕшрен пирĕн нумай учрежденисемпе предприятисем паян кунччченех тивĕçлĕ тасалăхпа мухтанма пултараймаççĕ-ха. Çак хушăрах чылай учрежденисемпе предприятисем санитари йĕркине хăйсем пăсса пыраççĕ. Уйрăмăнах халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисенче те тирпейсĕрлĕх пулнине тӳсме çук. Çĕмĕрле, Уравăш (Вăрнар р.), Кармăш (Куславкка р.) больницисенче приемнăй пӳлĕмсем тата чирлисем выртакан палатăсем таса мар, больница картишĕсенче, çуртĕсенче, кладовойсенче—тĕрлĕ çӳп-çап, ăпăр-тапăр тулса ларнă. Паллах, çакăн пек тасамарлăхпа ĕçлекен больницăри медработниксем санитарипе тасалăхшăн агитаци туни халăх хушшинче авторитетсăр пулать. Кунта тасалăхшăн кĕрешессине çав больницăсенчен пуçласа ямалла. Культура тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисенче те тасалăх чи çӳлĕ вырăнта тăмалла. Республикăри хăшпĕр шкулсене илсен, вĕсенче тасалăх çук. Уйрăмах пыйтă хирĕç кĕрешессине вăйлатмалла. Çак ĕçе ялсовет исполкомĕсемпе колхоз правленисен çине тăрсах тытăнмалла. Мунча сахал вырăнсенче—обществăллă мунчасем лартмалла тата пур çĕрте те пыйтăсене пĕтермелли камерăсем тумалла.

Çуркунне çитсе тăчĕ. Çуркуннехи тата çуллахи вăхăтсенче вар-хырăм чирĕсене саракан шăнасем, тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăсем ĕрчеççĕ. Çавăнпа та хуласенче, ялсенче çав хурт-кăпшанкăсем ĕрчесе тухакан вырăнсене халех тасатса хумалла. Вар-хырăм чирĕсенчен сыхланас тĕлĕшпе каçни килтех апат-çимĕç тирпейне тăрăшса тытмалла, столовăйсене тирпейлĕн тытса усрамалла. Пирĕн республикăра пĕр ялсенче кăна 400 столовăй ытла шутланать. Çак столовăйсем пурте кăтартуллă тасалăхра тăмалла.

Тасамарлăхпа тирпейсĕрлĕхе хирĕç пурте çине тăрса кĕрешсен, пур çĕрте те санитарипе тасалăха тĕплĕн тытса пырсан, пирĕн халăхшăн нимĕнле ерекен чир те хăрушă пулмĕ. Манма юрамасть: сикекен чирсем вĕсем пирĕн тискер тăшманăн сывăх союзникĕсем. Çавăнпа та çав чирсене хирĕç, фронтри тăшмана хирĕç кĕрешнĕ пекех, пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

Военнăй Заема сарас ĕçри çĕкленĕве малалла вăйлатса пырар!

Трактористсем 1000-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç

Красноармейски машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем, ремонтри рабочисем тата служащисем 1942 çулти Военнăй Заема пурĕ 40.500 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Трактор бригадисен бригадирĕсем Белов, Хрисанов, Гаврилов юлташсем 1000-шер тенкĕлĕх, Николаева, Павлова юлташсем 750-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç. Хрисанов юлташăн бригади çĕнĕ заема пурĕ 5.500 тенкĕлĕх, Гаврилов юлташăн бригади 3.750 тенкĕлĕх çырăнса илчĕ.

М. АРЗАМАСЦЕВ.
МТС политотделĕн начальникĕ.

Малтанхи кун

СОВЕТСКОЕ. Апрелĕн 13-мĕш. (Телефонпа). Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕ çинчен радио пĕлтерӳ хыççăн районри предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. Митингсенче ĕççыннисем çĕнĕ заема активлăн çырăнма тытăнчĕç. «Крестьянская газета» колхоз членĕсем заема 20.000 тенкĕлĕх, «Новый путь» колхоз членĕсем 15.600 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ку колхозсенче заем укçине малтанхи кунах пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

«Новый путь» колхозри стахановка ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен канашлăвĕн делегатки Агрипина Юхтанова юлташ, вăрçă вăхăтĕнчи заема çырăнса, çапла каларĕ:

— Манăн упăшка фронтра гитлеровецсене хирĕç вилĕмрен хăрамасăр çапăçать. Эпĕ колхозра канма пĕлмесĕр, вăй шеллемесĕр ĕçлетĕп. Фронта пулăшасси — пирĕн чыслă ĕç. Çавна асра тытса, эпĕ çĕнĕ заема 1.500 тенкĕлĕх çырăнатăп.

Юхтанова юлташ подписка суммине митинграх тӳлесе татрĕ. Çавăн пекех вăрçă вăхăтĕнчи заема 65 çулти старик Иван Андреев, халĕ çеç фронтран таврăннă А. Золов юлташсем 500-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех парса татрĕç.

Çĕнĕ заема сарас ĕç «Трудовик» «1-ое Мая», Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хушшинче те ăнăçлăн иртрĕ.

Районри ĕççыннисем çĕнĕ заема малтанхи кунах 300.000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Вăл шутран 150 пин тенкĕ укçине тӳлерĕç.

А. МИХАЙЛОВ.

ЗАЕМ САРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Апрелĕн 16-мĕш тĕлне республикипе заема 55.473.000 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран хуласенче — 22.694.000 тенкĕлĕх, ялсенче — 23.902.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 9.877.000 тенкĕлĕх сарнă.

Заема вырнаçтармалли вăхăтрах унăн укçине тӳлесе ĕç анлăн çаралса кайрĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай районĕсем пример кăтартаççĕ.

Сĕнтĕр районĕнче заем укçине 1.387.000 тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче—1.370.000 тенкĕ пухнă. Вĕсем хыççăн Шăхасан (1.171.000 тенкĕ), Вăрмар (1.150.000 тенкĕ), Елчĕк (1.126.000 тенкĕ) тата Тăвай (1.026.000 тенкĕ) районĕсем пыраççĕ. Республикипе заем укçине 15.170.000 тенкĕ пухнă.

Çав вăхăтрах заема сарас тĕлĕшпе Канашпа Çĕмĕрле хулисем тата Йĕпреç районĕ юлса пыраççĕ.

Чкаловски районра заем пысăк хăвăртлăхпа сарăлать

ЧКАЛОВСКОЕ. Правительство 1942 çулти Военнăй Заем çинчен кăларнă постановленине Чкаловски районри ĕççыннисем патриотла пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. [illegible] служащисем хушшинче [illegible] пырать. Нимĕç захватчикĕсене [illegible] вăртрах арккатса тăкас шухăш-кăмăлпа арçынсем те, хĕрарăмсем те хăйсен укçи-тенкине государствăна пама тăрăшаççĕ.

Заема вырнаçтарма тытăнсан малтанхи кунсенех çак заема илме пĕтĕм районĕпе 3898 çын—1.524.690 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ку вăл район бюджетĕнче палăртнă суммăн 136 проценчĕ чухлĕ пулать. Çӳлте кăтартнă шутран 1.053.680 тенкине çак вăхăтрах пухса государство кассине хывнă.

Районри колхозсем заема, пурĕ 341.500 тенкĕлĕх çырăнса, 334.500 тенкине халех пухса панă. Промысла артелĕсем 4000 тенкĕлĕх çырăннă.

Уйрăм колхозниксем 3273 çын пурĕ пĕрле 1.017.290 тенкĕлĕх çырăнса 714.180 тенкине пухса панă.

Рабочисемпе служащисем 625 çын пурĕ 162.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Государствăн Военнăй Заемне çырăнасси уйрăмăнах колхозсенче организованно пырать. «Маяк» колхозăн колхозникĕсем 122.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çав вăхăтрах парса татнă; «Красное знамя» колхоз членĕсем 113.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çав кунах хывнă, «Правда» колхоз членĕсем 89.000 тенкĕлĕх çырăнса—61.000 тенкĕ хывнă; Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 74.000 тенкĕлĕх çырăнса—70.000 тенкине хывнă; «Кзыл Тан» колхоз членĕсем 26.000 тенкĕлĕх çырăнса, пĕтĕмпех парса татнă.

Заема сарас ĕç чарăнман-ха, ăна çырăнас текенсем татах та чылай.

Т. ВАЛЕЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.
ШАРАФУТДИНОВ.
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Колхоз процентлă облигацисене çырăнса илет

КУКЕÇ. ССР Союзĕн Совнаркомĕ Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларасси çинчен йышăннă постановление апрелĕн 13-мĕшĕнче радио тăрăх илтсенех Питукассинчи «Память Ленина» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем пĕрлешӳллĕ пухăва пухăнчĕç, вĕсем çĕнĕ заем çырăнасси çинчен сӳтсе яврĕç.

Колхоз председателĕ Демьянов юлташ çĕнĕ заема 100 тенкĕлĕх çырăнса, укçине 300 тенкĕ пачĕ. Ун хыççăн колхоз счетоводĕ Зайцев юлташ 600 тенкĕлĕх çырăнчĕ те укçине 100 тенкĕ хыврĕ. 57 çулти С. Иванов инвалид ферма заведующинче ĕçлет, вăл 500 тенкĕлĕх çырăнса, укçине 300 тенкĕ пачĕ.

— Нимĕç оккупанчĕсене каялла хăвалакан Хĕрлĕ Çара нумайрах танксем, самолетсем, винтовкăсем, минометсем туса парар. Фронта пĕтĕм вăйран пулăшар, — тет вăл.

Отечественнăй вăрçă фронтĕнчен отпуска таврăннă Ф. Андреев заема 300 тенкĕлĕх çырăнчĕ, подписка укçине çуррине çавăнтах хыврĕ. Д. Иванов колхозник 500 тенкĕлĕх çырăнса, укçине 250 тенкĕ, П. Егоров бригадир 500 тенкĕлĕх çырăнса, 150 тенкĕ хыврĕ.

Çав пухура колхозниксем çĕнĕ заема 6 пин тенкĕлĕх ытларах çырăнса, укçине 2 пин тенкĕ хыврĕç. Кунсăр пуçне колхоз хăй Заемăн процентлă кăларăмне 8 пин тенкĕлĕх илме йышăнчĕ, укçине 5 пин тенкĕ куçарса пачĕ.

Тепĕр кунне ирех колхоз правленине колхозниксем пухăнма пуçларĕç. Хăшĕсем ĕнерех çырăннă подписка укçине хываççĕ, пухăва пырайманнипе заем çырăнманнисем — çырăнаççĕ.

Колхозница Ф. Петрова 100 тенкĕ укса пырса пачĕ. Родионова колхозница 100 тенкĕ, Г. Павлов 150 тенкĕ укса хыврĕç.

Т. ЛОГИНОВ.

Ятарласа хаçат кăларчĕç

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне çырăнас ĕçе Чебторгра ĕçлекен служащисемпе рабочисем пурте хутшăннă. Вĕсем заема 44.745 тенкĕлĕх çырăннă. Çĕнĕ заем ячĕпе ятарласа стена хаçачĕ кăларнă.

Пысăк хавхаланупа çырăнаççĕ

КУСЛАВККА, апрелĕн 16-мĕш. (Телефонпа). Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕ районри ĕççыннисен патриотизмне татах та ытларах хавхалантарса çĕклерĕ. Районри ĕççыннисем, ССCР Совнаркомĕн постановленине хăпăллĕн ырласа, 1942 çулти Военнăй Заема пысăк çĕкленӳпе çырăнаççĕ. Виçĕ кун хушшинче заема сарма палăртнă малтанхи суммăна район тата ял советсем ытлашшипех тултарчĕç. Нумай колхозсем çĕнĕ заем укçине тӳлесе татрĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 1942 çулти Военнăй Заема 24.540 тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех тӳлерĕç. Çавăн пекех «Искра», Чкалов ячĕпе тăракан, «Новый путь» колхозсем те çĕнĕ заема палăртнă суммăран ирттерсе çырăнса, укçине пĕтĕмпех хывнă.

Заем сарас тĕлĕшпе уполномоченнăйсем лайăх ĕçлеççĕ. «Первомайск» колхозра ĕçлекен Ирина Чернова хăйĕн бригадинче заема 2600 тенкĕлĕх сарса, укçине пĕтĕмпех пуçтарса çитерчĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра коммунистка Н. Кузьмина хăйĕн бригадинче заема 2400 тенкĕлĕх сарнă, çырăннă укçана пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă.

Çав вăхăтрах «Спартак» тата «Заря» колхозсенчи комсодсем хăйсен ĕçне начар туса пыраççĕ. Кунта çĕнĕ заем укçине мĕнпурĕ те 300 тенкĕ çеç пухнă, заем çырăнас ĕçе пур колхозниксене те явăçтарман.

Н. ЛЬВОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Улатăр хулине Чăваш АССР государство влаçĕн çӳлти органĕсене тӳрремĕнех пăхăнса тăракан хуласен шутне кĕртесси çинчен

Улатăр хулине Улатăр районĕнчен уйăрса, Чăваш АССР государство влаçĕн çӳлти органĕсене тӳрремĕнех пăхăнса тăракан хуласен шутне кĕртес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн Ĕçсене Тăвакан А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти мартăн 3-мĕш.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Канаш хулине Чăваш АССР государство влаçĕн çӳлти органĕсене тӳрремĕнех пăхăнса тăракан хуласен шутне кĕртесси çинчен

Канаш хулине Канаш районĕнчен уйăрса, Чăваш АССР государство влаçĕн çӳлти органĕсене тӳрремĕнех пăхăнса тăракан хуласен шутне кĕртес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн Ĕçсене Тăвакан А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулти мартăн 3-мĕш.

* * *

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулти апрелĕн 10-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх Чăваш АССР-ĕнчи Улатăр тата Канаш хулисене тӳрремĕнех республикăна пăхăнса тăракан хуласен шутне кĕртнĕ.

Çĕркăмрăк промышленноçĕнче ĕçлекен работниксене наградăлани

Çĕркăмрăк кăларас тата боеприпассем хатĕрлес тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çĕркăмрăк промышленноçĕнче ĕçлекен работниксен пысăк группине наградăланă.

Ленин орденĕпе 48 çынна наградăланă: «Карагандауголь» трестăн 20-мĕш номерлĕ шахтăри навалоотбойщиксен бригадирне Газиз **Абдурахманова**, Таш-Кумыр рудникĕн 1-мĕш номерлĕ штольнинчи забойщика **Н. М. Бухаткина**, Кузбасс комбиначĕн начальникне **Л. Н. Задименкăна**, «Хакассуголь» трестăн Кански рудоуправленин горнăй мастерне **И. Ф. Кириченкăна**, Çĕркăмрăк Промышленность Халăх Комиссарĕн заместительне **И. Курмашева**, Çĕркăмрăк Промышленность Халăх Комиссарĕн заместительне **Д. Г. Оникана**, «Востсибуголь» трестăн управляющине **С. А. Попова**, Кок-Янгак рудникĕн 9-мĕш номерлĕ штольнинчи забойщика **Карим Сарыкова**, «Сахалинуголь» трестăн Магачи шахтинчи забойщика **М. Т. Щербана**, «Артемуголь» трестăн 3-Ц номерлĕ шахтăри навалоотбойщиксен бригадирне **И. Я. Юрова** тата ыттисене те.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 126 çынна;

«Знак почета» орденĕпе — 228 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе — 170 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе — 251 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 15-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче нимĕçсен 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 9 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне тата 8 пин тонна водоизмещениллĕ тепĕр транспортне торпеда ярса путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем çапăçăва хăйсен резервĕсене кĕртсе янă та контратака тунă контратакăна танксемпе артиллери пулăшса пынă. Пирĕн боецсем, противника каялла сирсе пăрахса, халăх пурăнакан çирĕплетнĕ пĕр пункта тытса илнĕ. Пĕр талăк хушшинче нимĕçсен 500 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе пĕтнĕ. Пирĕн артиллерипе пехота нимĕçсен танкне, орудине, 22 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 22 блиндажне çĕмĕрнĕ. Пирĕн трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче: 11 оруди, 38 станковăй тата ручной пулемет, шултăра йышши 3 пулемет, миномет, 87 винтовка, 2000 ытла патрон, 2 радиостанци, 2 полевой кухня тата ытти çар пурлăхĕсем те пур. Çав фронтăн тепĕр участокĕнче артиллерирен персе, нимĕçсен 9 орудине тата пулеметсен 4 точкине пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 180 çынна çити вилсе пĕтнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противника хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, нимĕçсенне 5 оруди, 6 миномет, 17 пулемет, 20 ещĕк снаряд, 1000 мина, 10 пин винтовка патронĕ, автоцистерна тата продовольстви тиенĕ 20 лав тытса илнĕ. Нимĕçсем çынсем тĕлĕшпе пысăк çухату тӳснĕ.

* * *

Крюк лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсен группи тăшманăн подразделенийĕ куçнине асăрханă. Нимĕçсем йышлăрах пулнине пăхмасăрах, лейтенант çапăçма шут тытнă та противника хăюллăн атакăланă. Нимĕçсем, вилнисене шутласан кăна 60 салтакпа офицера çухатса, каялла чакнă.

* * *

Çак кунсенче кĕçĕн лейтенантăн Мироновăн танк экипажĕ противникăн тылне хăюллăн кĕрсе кайнă. Тылра çӳресе танкистсем тăшмана чĕрĕ вăй тĕлĕшпе пысăк çухату кӳнĕ, 6 оруди, оборонăн 20 пунктне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старши сержант Геннадий Харламов, винтовкăран персе, çапăçу хирĕ тĕлĕнче нимĕçсен истребительне ӳкернĕ.

* * *

Ж. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсен тылĕнче кĕрешсенскер, халăх пурăнакан икĕ пысăк пункта пĕрлештерсе тăракан çул çинче засада тунă. Çав вырăна нимĕç пехотин колонни пырса çитнĕ. Тăшман çине кĕтмен çĕртен тапăнса, партизансем 22 гитлеровеца вĕлернĕ тата ручной пулемет, миномет, 6 винтовка, темиçе автомат тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 30-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи разведка тăвакан батальонăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Георг Коль çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть Старая Русса хулинче штаб йышăнса тăракан çуртсенчен пĕрне нимĕçсен 40 салтакĕ пухăнна пулнă. Вĕсене унта командовани тимĕр хĕрессем пама тесе пухнă. Шăп хĕрессем панă чухне çав çуртра питĕ вăйлă взрыв пулнă. Взрыв пулнипе салтаксем хĕрĕх çынĕ те пĕтнĕ, тата хĕрес панă çĕрте пулнă офицерсем те вилнĕ. Каярахпа çакă паллă пулнă: çав çурта партизансем мина хурса сирпĕнтерсе янă иккен. Тем пек шырасан та, взрыв тунă çынсене тупайман».

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш танковăй дивизийĕнчи 40-мĕш мотострелковăй полкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Георг Цехетмайер çапла каласа панă: «Мана çара çак çулти январĕн варринче илчĕç. 11 кун хушши эпĕ Дуисбургри казармăсенче пурăнтăм. 12-мĕш кунне мана фронта ячĕç. 3-мĕш ротăра çар ĕçне мĕнпурĕ те икĕ эрне кăна вĕреннĕ салтаксем нумай. Вĕсем пуринчен ытла рабочисем; юлашки вăхăтченех военнăй заводсенче ĕçлесе, вĕсем отсрочкăпа усă курнă. Çав ротăра 120 салтакран сывви, çар службине юрăхли мĕн пурĕ те 30 çынтан ытла мар».

* * *

Совет войскисем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕç ирсĕрĕсем халăха саратаççĕ, ялсене сунтараççĕ, стариксене, хĕрарăмсене, çамрăк ачасене пере-пере вĕлереççĕ. Ленинград облаçĕнчи Маслино, Дубовицы, Шезелево, Ефремово, Арефино, Городок тата Борисово ялĕсенче кăна гитлеровецсем çак юлашки вăхăтра 76 колхозника персе пăрахнă. Çав ялсенчи çынсенчен нумайĕшĕ йывăр аманнă. Туллимар данналйсем тăрăх, çав ялсенче колхозниксенне 365 çуртне, 4 шкула, 3 клуба, больницăсене пурне те тата колхозсен обществăллă çĕршер çурт йĕрĕсене сунтарса янă, çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 11 оруди, 59 пулемет, 250 винтовка, 16 автомат, 300 снаряд, 60.000 патрон, 3 радиостанци тата ытти çар пурлăхĕсем пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче кавалерин гвардейски чаçĕ халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем противникăн контратакисене сирсе пăрахнă, çавăн чухне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 750 çын вилсе тата аманса пĕтнĕ. Загольев юлташ командир пулса тăракан подразделени, противника хирĕç контратака туса, халăх пурăнакан çирĕплетнĕ пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 100 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн зенитчиксем халиччен пулса иртнĕ çапăçусенче тăшманăн пĕтĕмпе 386 самолет персе антарнă.

* * *

Пирĕн батальонăн командăй пункчĕ вырнаçса тăракан участока нимĕçсен танкĕ кĕрсе кайнă пулнă. Старши лейтенант Семенов тăшманăн машинине сывăха янă та ăна противотанковăй гранатăпа çĕмĕрнĕ.

* * *

Снайпер Григорий Волков юлашки уйăх хушшинче нимĕçсен 20 салтакне пĕтерсе тăкнă тата тăшман пулемечĕсен 3 расчетне стройран кăларнă.

* * *

Витебск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕ çинче кĕрешекен Д. юлташăн партизанла отрячĕ юлашки икĕ уйăх хушшинче чылай ăнăçлă операцисем туса ирттернĕ. Пĕр операцире партизансем нимĕçсен гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Урамсенче гитлеровецсен 80 вилли выртса юлнă. Тепĕр темиçе кунран партизансем йывăç каскалакан завода, нимĕçсем ĕçе янăскере, тата материалсем хунă мĕнпур складсене сунтарса янă. Çав çапăçурах нимĕçсен салтакĕсене тата завода хуралакан полицейскисене 80 çынна пĕтерсе тăкнă. Март уйăхĕн вĕçĕнче Д. юлташăн отрячĕ кӳршĕ районра кĕрешекен партизансен тепĕр отрячĕпе пĕрлешнĕ. Хăйсен пĕрлешнĕ вăйĕсемпе партизансем халăх пурăнакан пысăк пунктри нимĕçсен гарнизонне çапса аркатнă. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла пĕтнĕ. Партизансен отрячĕн командованийĕ нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен совет гражданĕсене, Хĕрлĕ Çар ретне тăма кăмăл тунăскерсене, 1500 çынна ытла фронт линийĕ урлă каçарнă.

* * *

Нимĕç лейтенанчĕ çумĕнче (унăн хушаматне палăртма май килмен) Белград хулинчен Эмиль Гертнерган илнĕ çырăва тупнă. Гертнер—тахçанхи фашист, хăйне доктор тесе калаканскер, çапла çырать: «Кунта халиччен те йĕркеллĕ пурнăç туса хума май килмест. Темĕнле çирĕп мерăсем йышăнсан та, саботажсем çапла пулса пыраççĕ. Питех те шел, парăнман серб халăхне йĕркене кĕртме салтаксем çитмеççĕ. Эпĕ хамăрăн кунта пĕтекен салтаксене хĕрхенетĕп. Таварсен хакĕсем çавтери вăйлăн ӳсе пыраççĕ, куллен кирлĕ япаласем тупма çук».

ÇУРАКИ УМĔН

Çĕр мĕн пама пултарнине йăлтах илесшĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. [illegible]

В. ЯРУКИН.

ÇЫНСЕНЕ ВЫРНАÇТАРНĂ

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси «Авангард» [illegible]

П. ЯКОВЛЕВ.

Пур ĕçе те кирлĕ пек туса çитермелле

ВĂРНАР. [illegible]

С. СЕЛЕЗНЕВ.

ТИХАСЕНЕ ĔÇЕ ВĔРЕНТЕÇÇĔ

СЕНТЕР. «Çĕнĕ Юнга» [illegible]

Ф. ЯНДУШКИН.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ

1941 çулта искусствăпа литературăра тунă питех те палăрса тăракан ĕçсемшĕн Сталинла премисем парасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ искусствăпа литературăра тунă питех те палăрса тăракан ĕçсемшĕн Сталинла премисем парасси çинчен 1939 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче тата 1942 çулти январĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртес майпа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1941 çулта тунă питех те палăрса тăракан ĕçсемшĕн Сталинла премисем çаксем енĕпе парас:

а) МУЗЫКА ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Александр Васильевич **Александрова**, ССР Союзĕн халăх артистне, Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе тăракан Государственнăй Консерваторин профессорне — «Гимн партии большевиков» ятлă юрăшăн тата красноармеецсен юррисемшĕн.

2. Дмитрий Дмитриевич **Шостаковича**, Ленинградри Ленин орденлĕ Государственнăй Консерваторин профессорне — 7-мĕш симфонишĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Владимир Григорьевич **Захарова**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне—пуриншĕн те паллă пулса тăракан «И кто его знает», «Дороженька», «Два сокола» тата ытти юрăсен музыкисемшĕн.

2. Шалва Михайлович **Мшвелидзене**, Грузин ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне — «Звиадаури» ятлă симфониллĕ поэмăшăн.

б) ЖИВОПИСЬ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. **Кукрыниксы** (Михаил Васильевич **Куприянова**, Порфирий Никитич **Крылова**, Николай Александрович **Соколова**) — политикăллă плакатсемпе карикатурăсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. **Уча** Малакиевич **Джапаридзене** — «Первомайская демонстрация в Тбилиси в 1901 году» ятлă картинăшăн.

2. Павел Петрович **Соколов-Скаляна** Георгий Константинович **Савицкие**, Михаил Михайлович **Черемныха**, Петр Митрофанович **Шухмина**, Николай Эрнестович **Радлова** — политикăллă плакатсемпе карикатурăсемшĕн.

в) СКУЛЬПТУРА ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Пинхос Владимирович **Сабсая** — С. М. Кировăн Баку хулинче лартнă памятникĕшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Всеволод Всеволодович **Лишева** — Н. Г. Чернышевский скульптурине тунăшăн.

2. Исаак Абрамович **Менделевича** — В. П. Чкаловăн Горький хулинче лартнă памятникĕшĕн.

г) АРХИТЕКТУРА ЕНĔПЕ

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Александр Иванович **Таманяна** — Армян ССР Правительствин Ереван хулинче туса лартнă çуртĕн архитектура проекчĕшĕн.

д) ТЕАТРПА ДРАМА ИСКУССТВИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Владимир Иванович **Немирович-Данченкăна**, СССР халăх артистне, Николай Павлович **Хмелева**, СССР халăх артистне, Борис Николаевич **Ливанова**, РСФСР халăх артистне, Алексей Николаевич **Грибова**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне — Мускаври Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Горький ячĕпе тăракан Художествăллă Академиллĕ театрта лартнă «Кремлевские куранты» спектакльшĕн.

2. Илья Яковлевич **Судакова**, РСФСР халăх артистне, Николай Афанасьевич **Светловидова**, РСФСР халăх артистне, Александр Иванович **Зражевские**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Игорь Владимирович **Ильинские** — Государствăн Ленин орденлĕ Академиллĕ кĕçĕн театрĕнче лартнă «В степях Украины» спектакльшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Акакий Алексеевич **Васадзене**, СССР халăх артистне — Тбилисири Руставели ячĕпе тăракан Драма театрĕнче лартнă «Киквидзе» ятлă спектакльре Киквидзе рольне выляннăшăн.

2. Вера Петровна **Марецкаяна**, РСФСР тава тивĕçлĕ артисткине — Мускаври Моссовет ячĕпе тăракан театрта лартнă «Надежда Дурова» ятлă спектакльре Надежда Дурова рольне выляннăшăн.

е) ОПЕРА ИСКУССТВИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Александр Шамильевич **Мелик-Пашаева**, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Максим Дормидонтович **Михайлова**, СССР халăх артистне, Григорий Филиппович **Большакова**, Пантелеймон Маркович **Норцова**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Елизавета Ивановна **Антоновăна** — ССР Союзĕн Ленин орденлĕ Академиллĕ Пысăк Театрĕнче лартнă П. И. Чайковскин «Черевички» ятлă спектакльшĕн.

2. Арий Моисеевич **Пазовские**, СССР халăх артистне, Георгий Михайлович **Нелепа**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Борис Матвеевич **Фрейдкова**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Ольга Афанасьевна **Кашеваровăна** — Ленинградри Киров ячĕпе тăракан Оперăпа Балетăн Ленин орденлĕ театрĕнче лартнă П. И. Чайковскин «Чародейка» ятлă спектакльшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Халима **Насыровăна**, СССР халăх артисткине — Узбексен Оперăпа Балетăн Ленин орденлĕ театрĕнче лартнă «Лейли и Меджнун» спектакльре Лейли рольне выляннăшăн.

2. Иван Сергеевич **Паторжинские**, УССР халăх артистне — Киеври Оперăпа Балетăн Шевченко ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ театрĕнче лартнă «Тарас Бульба» спектакльре Тарас Бульба рольне выляннăшăн.

ж) БАЛЕТ ИСКУССТВИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Игорь Александрович **Моисеева**, халăх ташшисен Государственнăй ансамблĕн художественнăй руководительне — халăх ташшисем енĕпе питех те палăрмалла ĕçсем тунăшăн.

з) ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ КИНЕМАТОГРАФИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Игорь Андреевич **Савченкăна**, режиссера, Николай Дмитриевич **Мордвинова**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Юрий Израилевич **Экельчика**, оператора — «Богдан Хмельницкий» кинокартинăшăн.

2. Сергей Дмитриевич **Васильева**, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Георгий Николаевич **Васильева**, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Михаил Георгиевич **Геловани**не, артиста, Николай Иванович **Боголюбова**, артиста, Михаил Иванович **Жарова**, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне, Алексей Иванович **Сигаева**, оператора — «Оборона Царицына» (пĕрремĕш сери) кинокартинăшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Виктор Владимирович **Эйсмонта**, режиссера, Сергей Владимирович **Михалкова**, сценариста, Михаил Яковлевич **Розенберга**, сценариста, Зоя Алексеевна **Федоровăна**, артисткăна, Вульф Абрамович **Раппопорта**, оператора — «Фронтовые подруги» кинокартинăшăн.

2. Иван Алексеевич **Пырьева**, режиссера, Виктор Михайлович **Гусева**, сценариста, Тихон Николаевич **Хренникова**, композитора, Марина Алексеевна **Ладынинăна**, артисткăна, Валентин Ефимович **Павлова**, оператора — «Свинарка и пастух» кинокартинăшăн.

и) ХРОНИКĂЛЛĂ-ДОКУМЕНТЛĂ КИНЕМАТОГРАФИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Илья Петрович **Копалина**, режиссера, Леонид Васильевич **Варламова**, режиссера, Теодор Захарович **Бунимовича**, оператора, Георгий Маркович **Боброва**, оператора, Павел Александрович **Касаткина**, оператора, Анатолий Александрович **Крылова**, оператора, Алексей Алексеевич **Лебедева**, оператора, Михаил Абрамович **Шнейдерова**, оператора, Александр Павлович Эльберта, оператора — «Разгром немецких войск под Москвой» кинокартинăшăн.

2. Роман Лазаревич **Кармена**, режиссера, Михаил Федорович **Ощуркова**, оператора, Борис Рудольфович **Небылицкие**, оператора, Николай Александрович **Лыткина**, оператора, Давид Григорьевич **Шоломовича**, оператора, Владимир Анисимович **Фроленкăна**, оператора — «День Нового мира» кинокартинăшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Михаил Яковлевич **Слуцкие**, режиссера, Иван Иванович **Белякова**, оператора, Василий Васильевич **Соловьева**, оператора — «Наша Москва» кинокартинăшăн.

к) ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ ПРОЗА ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Илья Григорьевич **Эренбурга** — «Падение Парижа» романшăн.

2. Василий Григорьевич **Янчевецкие** **(В. Яна)** — «Чингис-Хан» романшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Сергей Петрович **Бородина**—«Дмитрий Донской» романшăн.

2. Анна Арнольдовна **Антоновскаяна**—«Великий Моурави» романшăн.

л) ПОЭЗИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Николай Семенович **Тихонова** — «Киров с нами» поэмăшăн, «В лесах, на полянах мшистых», «Растет, шумит вихрь народной славы» тата ытти сăвăсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Самуил Яковлевич **Маршака** — плакатсемпе карикатурăсем айне çырса панă сăвăллă текстсемшĕн.

м) ДРАМАТУРГИ ЕНĔПЕ

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Константин Михайлович **Симонова**—«Парень из нашего города» пьесăшăн.

2. Александр Евдокимович **Корнейчука** — «В степях Украины» пьесăшăн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 50.000 тенкĕлĕх

1. Самед **Вургуна** — «Фархад и Ширин» пьесăшăн.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 11-мĕш.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Виши правительствине янă нота

ВАШИНГТОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Государство департаменчĕ государство секретарĕн ĕçĕсене туса тăракан Уэллес Франци посолĕ Анри Эйпатне янă нотăна пичетлесе кăларнă. Çав нота вăл Виши правительствин 1942 çулти апрелĕн 9-мĕшĕнче янă ноти çине, Браззавилльре Америкăн генеральнăй консульствине туни çинчен пĕлтернĕ пирки янăскер çине панă ответ пулса тăрать.

25 çул хаярах кăна, — тенĕ США нотинче, — Франци çарĕпе Америка çарĕ пĕр-пĕринпе юнашар тăрса çав хаяр агрессора хирĕçех, халь каллех Францие çĕмĕрсе кĕнĕ агрессора хирĕçех кĕрешнĕччĕ. Америка правительстви ĕнтĕ темиçе хут та каланă: вăл Франци территорийĕнче тата Францин тинĕс урлă выртакан владенийĕсенче Франци халăхĕ хуçа пулса тăнине йышăнать. Франция каллех никама пăхăнман государство пулса тăнипе, Франци территорийĕ каллех пĕр татăкланчăксăр пулса тăнине курма Америка правительстви чĕререн шанса кĕтсе тăрать. Анчах та çав ĕмĕте ăна Германири хальхи вăхăтри ирсĕр режима тĕппипех пĕтерсен кăна, Германин çарĕсене тата Германи çумне хутшăннă диктаторла режимсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăксан кăна пурнăçа кĕртме пулать. Çакна пĕтĕм Франци халăхĕ лайăх пĕлсе тăрать, çакна çав шутрах Францие сутса янă пĕчĕк çеç ушкăн та лайăх пĕлсе тăрать.

Хальхи вăхăтра, — тенĕ малалла çав нотăра, — Континентлă Францин чылай пысăк пайне Германи çарĕсем оккупациленĕ. Виши правительстви ĕнтĕ хăй Германипе перемири çинчен 1940 çулти июньре тунă килĕшĕвĕн условийĕсемпе çыхăннă. Анчах Франци территорийĕн пĕр пайне французсен урăх влаçĕсем, Виши правительствин прависене йышăнман тата ирĕклĕх вăйĕсен енче тăрса активлăн çапăçакан влаçсем контрольлесе тăраççĕ. Французсен Экваторти Африкинче, Камерунра ĕç шăпах çавăн пек тăрать ĕнтĕ. Америка правительстви нумаях пулмасть Камеруна хăйĕн генеральнăй консулне ячĕ. Виши правительстви халь калакан территорие чăннипе хăй контрольлесе тăнă пулсассăн, Америка правительстви çав территори çинче хăйĕн генеральнăй консульствине туса хуриччен Виши правительствипе калаçса илнĕ пулĕччĕ ĕнтĕ. Çапла ĕнтĕ, пĕрлешнĕ çĕршывсем татăклăнах çĕнтериччен тата Франци халăхĕ çĕнĕрен хăйĕн кунçулне хăй йĕркелесе тăма пуçлаччен Америка правительстви Францин Америкăри тата Лăпкă океанри территорийĕсем тĕлĕшпе маларах кăтартса панă политикăна тытса пырĕ, французсен çав территорисене чăннипех контрольлесе тăракан граждансемпе çыхăнну тытса тăрĕ.

Германин агрессорĕсем, хăйсен суеçĕ пропагандишĕн характерлă пулса тăракан ултавпа усă курса, Франци халăхне унăн хăйĕн авалтанхи тусĕсем тĕлĕшпе куллене иккĕлентерме, вĕсене шанми тума тăрăшаççĕ. Вĕсем çакăн пек тăрăшни халиччен ăнман, малашне те ăнас çук. Франци халăхĕ ăна Америка халăхĕ чăннипех те чун-чĕререн хăйăллани пирки нихăçан та иккĕленмен. Франци халăхĕ акă çакна шанмаллипех шанса тăма пултарать: Америка правительствипе Америка халăхĕ Франци халăхĕн тивĕçлĕ прависене ĕлĕкхи пекех туллин хисеплесе тăрĕç. Франци халăхĕ, пĕрлешнĕ вăйсем çĕнтерсен, ăна хăйĕн прависене пĕтĕмпех таврăрса парассине малашне те шанса тăма пултарать.

ЖЕНЕВА, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Виши правительстви хăйĕн США-ри посолне: Виши правительстви Америка правительствин нотине йышăнмасть, тесе калама хушнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Апрелĕн 11-мĕшпе 15-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Япони войскисем юлашки кунсенче Лусон утравĕ çинче Батаан çурутравĕ тăрăх наступлени туса пырса ăнăçусем тунă пулин те, Филиппин çинче кĕрешӳ чарăнман (японецсем çав кĕрешӳ чарăннă тесе шутланă), чарăнма мар, вăл татах та ытларах çивĕчленсе кайнă. Батаан çурутравĕн кăнтăр пайĕнчен японецсем хăйсен тĕп вăйне Манила заливне кĕнĕ вырăнта ларакан Коррегидор утравне хирĕç янă. Çак утрав вăл питĕ вăйлă укреплени пулса тăрать. Ун çине японецсен батарейисем Манила заливĕн кăнтăр çыранĕ çинчен те, Батаан çурутравĕ çинчен те тăтăшах хĕреслетсе персе тăраççĕ.

Себу утравĕ çинче те (Лусон утравĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерех) вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Çав утрав çине японецсен войскисем пырса аннă. Унта Америкăпа Филиппин войскисем йышлă мар пулин те, вĕсем японецсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Войскăсене утрав çине антарнă чухне японецсен крейсерне путарнă. Анса юлнă японецсен войскисем пысăк хĕнпе кăна шалалла кĕрсе пыраççĕ. Себу утравĕ çинче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Бирмăра, килнĕ хыпарсем тăрăх, вăрçă ĕçĕсем Тоунгупа Проме хулисенчен çурçĕр енчи вырăнсенче пыраççĕ. Кăшт чарăнса тăнă хыççăн халĕ хаяр çапăçусем çĕнĕрен пĕтĕм фрончĕпех пуçланса кайнă. Японецсем пуринчен ытла Тоунгу районĕнче чугунçул тăрăх тата çавăн пекех Иравади юхан шывĕ тăрăх çурçĕрелле вăйлăн хĕссе пыраççĕ. Япони войскисен ĕçĕсене авиацийĕпе артиллери пулăшса тăраççĕ. Анчах та японецсем Англи çарĕсен Проме секторĕнчи оборонине, çавăн пекех тата Тоунгуран çурçĕр енчерехри районра кĕрешекен Китай войскисен оборонине çĕмĕрсе кĕрейменççĕ.

Австралин çурçĕр çыранĕ районĕнче, Çĕнĕ Гвинея, Çĕнĕ Британия тата Тимор районĕнче союзникисен авиацийĕн ĕçĕсем палăрмаллах активланнă, Япони авиацин ĕçĕсем чакнă. Австралин бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем Çĕнĕ Гвинея çыранĕ çине, Рабаул (Çĕнĕ Британия) çине тата Купанг (Тимор) çине час-часах вĕçсе пырса тапăнаççĕ. Вĕсем аэродромсем çине, çар суднисемпе ытти суднăсем çине, çавăн пекех тата тĕрлĕ çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахаççĕ. Çав операцисене пула Япони авиацийĕ пысăк çухатусем тӳсет. Японецсем юлашки эрнере Çĕнĕ Гвинея çинче кăна 40 самолет çухатнă. Япони авиацийĕ Цейлон утравне хирĕç тăвакан операцисенче чылай пысăк çухатусем тӳсет. Тринкомали (Цейлонăн çурçĕр-хĕвелтухăç çыранĕ) çине апрелĕн 9-мĕшĕнче пырса тапăннă чухне японецсен 21 самолечĕ пĕтнĕ.

Риомри процесăн ĕçне паллă мар вăхăта куçарнă

ЖЕНЕВА, апрелĕн 14-мĕш. (ТАСС). Малтан пĕлтерсе хунă тăрăх, Риомри процесăн малалли ларăвĕ паян пуçланмаллаччĕ. Анчах та суд председателĕ Кау çапла пĕлтернĕ: суд ларăвĕсем халĕ текех пулмаççĕ, процесăн ĕçĕ паллă мар вăхăта куçать, тенĕ.

Процеса мĕншĕн паллă мар вăхăта куçарни çинчен «Журналь офисиель» хаçатăн паянхи номерĕнче ятарласа çырнă декретра ăнлантарса панă. Унта çапла каланă: Риомри суд палатин «следстви ĕçне татах та нумай материалсем тупса вĕçлемелле. Çав материалсем айăпланакансен айăпне пĕтĕмĕшпех туллин кăтартса памалла, пуринчен малтан вĕсен 1939 çулти сентябрĕн 4-мĕш умĕн мирлĕ саманаран вăрçа кĕрсе каяс тĕлĕшпе тунă ĕçĕсене тата унччен хыççăнхи лару-тăрăва çивĕчлетсе яма пултарнă ĕçĕсем пирки калакан материалсене те пĕтĕмпех тупса пăхса тухмалла»,—тенĕ.

Риомри процесс тăрăх айăпланакансем Буррасоль тĕрминчех лараççĕ.

Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: апрелĕн 13-мĕшĕнче Англин колоннисемпе патрулĕсем тăшманăн чаçĕсене хирĕç çапăçнă, пуринчен те вăйлă рах тытăçусем фронтăн çурçĕр участокĕнче пулса иртнĕ. Противникăн кунти чаçĕсен артиллери те, танксем те пур.

Çавăн пекех тата апрелĕн 13-мĕшĕнче Англин истребителĕсем Киренаикăри фронтăн малти участокĕнче активлă операцисем туса ирттернĕ. Пĕр «Мессершмитт-109» самолета персе антарнă, теприне сиенленĕ.

Англи авиацийĕ Рур облаçĕпе Гавр çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапăннă

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Рур облаçĕ çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапăннă. Пуринчен ытла бомбăсем промышленность объекчĕсем çине пĕтех те вăйлăн лекнĕ. Бомбăсем пăрахнипе вăйлă пушарсем тухнă. Унсăр пуçне тата Англи авиацийĕ Гаврти доксем çине тата оккупациленĕ территори çинчи аэродромсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники: технологи по холодной обработке металла, по сварочным работам, по литейному делу, металлург по цветному литью, инженеры по приборам, металловед по оборудованию, по инструменту и конструкторы, техники-планировщики, экономисты, техник-сметчик, складские, снабженческие работники, бухгалтеры; **рабочие следующих квалификаций:** токаря, фрезеровщики, строгальщики, долбежники, термисты, станочник по дереву, столяры, плотники, слесарь, электро-монтеры, слаботочники, радист, шорник-смазчик, печник, формовщики, прессовщики, штамповщики, каменщики, штукатуры, стекольщик, лаковары, грузчики, подсобные рабочие, уборщицы, курьеры.

Требуются также вахтеры-охранники (мужчины и женщины), пожарные работники.

Вахтеры, пожарные работники и грузчики обеспечиваются общежитием.

Принимаются переквалификанты (взрослые ученики от 16 лет) по специальностям: лаковары, слесари, прессовщики, машинисты, резчики, монтеры, обрубщики, формовщики, штамповщицы и др.

Обращаться от 10 до 11 час. по адресу: гор. Чебоксары, Ленинградская ул., 28, бюро пропусков.

Совет Союзĕ тăрăх

Икĕ заемăн тиражĕсем пулса иртнĕ

Апрелĕн 15-мĕшĕнче Мускавра Иккĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемĕн 23-мĕш тиражĕ тата ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли заемăн 16-мĕш тиражĕ пулса иртнĕ. Иккĕмĕш пятилетка заемĕ тăрăх 1.440.000 выигрыш тухнă, пĕтĕмпе 239.420.000 тенкĕлĕх, ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли заем тăрăх 344.500 выигрыш тухнă, пĕтĕмпе 55.628.000 тенкĕлĕх.

Иккĕмĕш пятилетка заемĕ тăрăх чи малтанхи 3.000 тенкĕлĕх пысăк выигрыш 02.574-мĕш номерлĕ серин 42-мĕш номерлĕ облигацийĕ çине тухнă, ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли заем тăрăх чи малтанхи 3.000 тенкĕлĕх пысăк выигрыш 32.428-мĕш номерлĕ серин 39-мĕш номерлĕ облигацийĕ çине тухнă. (ТАСС).

Красноармеецсен çемьисене пулăшни

Карел-Финн Советлă Социализмлă Республикинчи ĕççыннисем тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн, пĕтĕм ăшă кăмăлпа ĕçлеççĕ. Ку ĕçе тимуровецсен командисем активлăн хутшăнаççĕ.

Пудожски районра фронтра çапăçакан Барышевпа Богданов çемьисене «Буря» колхоз правленийĕ пĕрер ĕне панă. Елисеев çемьи валли «Коммунар» колхоз пӳрт уйăрса хунă, Коковуров çемйине ĕне тата килте кирлĕ япаласем илме Красин ячĕпе тăракан колхоз 1.300 тенкĕ укçа панă, Баранов çемйине çав тĕлĕшпех 1000 тенкĕ панă. Районри колхозсен пулăшу кассисем пĕр вăхăтрах пулăшу 91 çемьене панă.

Хĕрлĕ Çара кайнисен çемйисене тепĕр районра та лайăх пулăшаççĕ. Боецсемпе командирсен арăмĕсене, ашшĕсене, амăшĕсене тата аппăшĕсене 187 çынна ĕçе вырнаçтарнă, вуншар пĕчĕк ачана ача садĕсене, яслисене вырнаçтарнă, 26 çемьене çителĕклĕ таранах вутă турттарса панă. Инвăç касалакан 21-мĕш номерлĕ заводра 4 çемьене çĕнĕ, лайăх кваттерсем панă.

Совет тата обществăллă организацисем пулăшнисĕр пуçне, военнослужащисен çемьисене государство та тăтăшах пособи парса тăрать. Республикăри социальнăй обеспечени органĕсем отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа 5.500.000 тенкĕ пособи панă тата пĕр вăхăтлăх пулăшу шучĕпе 600.000 тенкĕ укçа панă. (ТАСС).

КАСПИ ТИНĔСĔНЧЕ ПАРОХОДСЕМ ÇӲРЕМЕ ПУÇЛАНĂ

Каспи тинĕсĕнче пароходсем çӳреме пуçланă. Чи малтан тинĕсе «Каспитанкер» пароходствин суднисем тухнă. Рейса тухса кайнă караванри 6 танкерăн трюмĕсенче вуншар пин тонна горючи.

КĔСКЕН

▲ Харьков облаçĕн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Савински районĕнче вырăнти промышленность хăвăртлăн ӳссе пырать. Атă-тумак тата çĕвĕ мастерскойĕсем ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ. Супăнь туса кăларас ĕçе лайăх йĕркелесе янă. Часах кирпĕч заводĕ тата обоз мастерскойĕ ĕçе каяççĕ.

▲ Азов тинĕсĕнче пулă тытас ĕç пуçланнă. Приморско-Ахтарски районри пулăçăсен Чапаев ячĕпе тăракан колхозĕ 9 кун хушшинче 2.700 центнер судак пулă тытса пулă заводне панă. Çакă вăл квартал планĕн шăпах çурри пулать. «Октябрь» колхоз та 1.500 центнер пулă тытса завода панă. Çапла ку колхоз пулă тытас ĕç пуçланнă малтанхи кунсенчех уйăхри плана тултарнă.

НТ 448 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 205. Ф. 6, 58 64 п: я: